Данилăв-Чалдун

# Ункăран



Чăвашиздат-1935

М. Н. ДАНИЛĂВ—ЧАЛДУН

Н 32/9
127а
Чув.
2-2136а

# УНКĂРАН

28161

Гос. Публичная Б-ка в Ленинграде

ЧĂВАШИЗДАТ—ЛИТÇЕКТĂР
Шупашкар 1935

ПРОВЕРЕНО 07

2-2136 г

28161-чув.

Республиканская
библиотека
Министерства
Чувашской АССР

Редактор *Н. К. Кириллов.* Техредактор *Н. С. Степанов*

Сдано в производство 31/I-35 г. Подписано к печати 21/II—35 г.
Уполн. Чувашлита № 1257. Заказ № 258. Чувашгиз № 29. Инд **Х—2**.
Тираж 4000 экз. Ф. б. 72×105 1/32. Об'ем 1,25 п л.

г. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиза, Канашская, 16.

## Издателстваран.

Нойабĕр уйăхĕнче «Колхозник йалавĕ» хаçатра М. Данилăв-Чалдун йулташăн „Ункăран“ йатлă калавĕ пичетленсе тухрĕ. Çакăн хыççăн колхозсемпе йалсенчен, шкулсенчен кулленех çак калав пирки нумай çырусем килме пуçларĕç. Çырусем пурте „Ункăран“ калава вулав çурчĕсенче, халăх пухăвĕсенче тата вĕренекенсем хăйсен ашшĕ амăшĕсене вуласа пани çинчен калаççĕ.

Акă вĕсенчен хăшпĕрисем:

Кĕçĕн Йелчĕкри вулав çурчĕн пуçлăхĕ Йефим Игнатйĕв çапла çырать:

> „Ункăран“ калава вулав çуртне пыракан колхозниксемпе çамрăксене темиçе хутчен те вуласа патăм. Калав итлекен колхозниксем сирĕнтен татах „Ункăран“ йевĕрлĕ калавсем пичетлесе пама ыйтаççĕ“.

Малала Игнатйĕв йулташ хăйĕн çырăвĕнче 1917—23-мĕш çулсенче хăй çарта пулни çинчен кĕскен аса илсе çырать.

Çĕнĕ Мамири (Канаш р.) „Ворошилăв“ колхозран А. Йефимăв йулташ та „Ункăран“ калава колхозниксем пысăк хапăлпа вуларĕç, тесе пĕлтерет.

> „Пирĕн Ворошилăв йулташ йачĕпе тăракан колхозра „Ункăран“ калава вуламан колхозник йулмарĕ. Есĕр çĕнĕ калавсем тата пичетлесе кăлара-

тăр пулĕ тесе „Колхозник йалавĕ“ хаçата 25 екçемпљар сырăнтăмăр“.

Палтай шкулĕнче (Йетĕрне р.) вĕренекен П. Бойков йулташ „Ункăран“ калава вуланă хыççăн çапла çырса пĕлтерет.

„Ку вăхăтчен епĕ сирĕнпе çыхăну тытман. „Ункăран“ калава вуланă хыççăн хамăн шухăша каласа памасăр тăма пултараймарăм. Чалдун йулташăн калавĕнчи Çĕпĕр партизанĕсем, револђуцишĕн хăйсене хĕрхенмесĕр тăшмансемпе çапăçакан паттăрсем, пирĕн чĕререн тухас çук. Чалдун калавĕ — пирĕншĕн хаклă калав. Калава çăмăл чĕлхепе çырнă. Палтай шкулĕнче вĕренекен çамрăксем Чалдун йулташран илемлĕ калавсем татах кĕтеççĕ“.

Акă тата, çичĕ çул хушши граждăн вăрçинче шуррисемпе çапăçса, инвалида тухнă колхозникăн ывăлĕ Й. М. Йефимăв çапла çырат:

„Пирĕн Вăрăм Тури (Шупашкар р.) колхозниксем „Ункăран“ йатлă калава пĕтĕмпех вуласа пычĕç. Епĕ хам та хамăн атте-аннене çак калава вуласа патăм. Çакăн хыççăн манăн атте нумайччен никама сăмах ченмесĕр тĕлĕрсе ларчĕ. — Çапла çав, ачам, санăн аçу та 7 çул хушши вăрçăсенче çапăçнă чухне йăвăрлăхсем сахалах курман. «Ункăран» калавра çырнă хăрушă вăхăтсем тĕрĕс пулнă, — тесе хучĕ манăн атте“.

Шупашкар районĕнчи Мăн Карачурари колхозниксем вунпĕрĕн пухăнса çыру çырса йачĕç. Çырура вĕсем çапла калаççĕ:

„Чалдун йулташăн „Ункăран“ йатлă калавне темиçе хутчен те колхозниксене вуласа панă. Çакнашкал калавсене час-часах хаçатра пичетлесе кăларма

ыйтатпăр. Кунпа пĕрлех „Колхозннк йалавне"— пирĕн колхозсем мĕнле çуралса ӳсни çинчен илемлĕ калавсем çырса иама сĕнетпĕр епĕр".

Çакăнга кăтартнă çырусем колхозниксем хушшинче илемлĕ литературăна вулас текенсен шучĕ кулленех ӳссе пыни çинчен калаççĕ. Вĕсемех тата çав вулакансем литературă ĕçне активлăн хутшăнса пынине те кăтартаççĕ. Хăйсен çырăвĕсенче вĕсем колхоз йенĕпе те тата социалисăм строителствин ытти йенĕсен тĕлĕшĕпе те илемлĕ калавсем çырса пама ыйтаççĕ.

Колхозниксем ыйтнине шута илсе, епĕр Чалдунăн «Ункăран»калавне уйрăм кĕнеке туса кăларатпăр.

Редактăр.

---

# УНКĂРАН

## I

Тарăн шухăша путса, йăвăррăн кашлаççĕ тайгари ватă кедрсем, чăрăшсем, пихтăсем. Йĕри-тавра нӳр, çĕрĕк йăвăç, кăмпа, мăк шăрши. Сывлама йăвăр. Çăварпа сывласан, пыр тĕпне касать, сăмсапа сывласан, вĕтĕ табак туртнă пек ӳсĕрттерет. Хура сăкман пек карса илнĕ хура пĕлĕтрен кĕрхи вĕтĕ çăмăр йăсласа анать. Çавăнпа та çанталăк пушшех нӳрлĕ сăнлă курăнать.

Шчетинкин партизан отрйачĕ, шуррисен каратĕлни отрйачĕпе виçĕ тавлăк пĕр чарăнмасăр çапăçнă хыççăн, ывăннă,—малала чăтса тăрайман, вăхăтлăха чакса, çĕнĕрен вăй пуçтарса, тепĕр хут тытăçма шутланă.

Шуррисем ытла хĕстернипе вăл çĕрле чакнă. Çăмăр çунипе кĕркуннехи çĕр тĕттĕм пулнă. Уйăх мар, çăлтăр та курăнман. Çавăн пирки отрйад ăçтала чакнине Шчетинкин хăй те, партизанĕсем те чухласа илеймен. Йулашкинчен, аташса, çын кĕрсе тухайми лачака ункине кĕрсе кайнă. Лачака йĕри-тавра хĕрĕх çухрăм. Шăп вăтаçĕрĕнче утрав. Утравĕн урлăшĕ ултă çухрăм, тăрăшшĕ — тăхăр çухрăм.

Çав лачака ункинчен ĕнтĕ Абакан йатлă пысăк, пулăлă, ыткăнса йухакан, сулхăн шывлă çырма пуçланса кайать. Абакан тăрăх çула пĕчĕкрех прахутсем те çӳреççĕ. Абакан шывĕ Минуçинск

хулинчен кăшт айаларах Йениçей шывне пырса хутшăнать.

Çав лачака ункине кĕрсен, унтан тухма питĕ кансĕр. Икĕ вырăнта çеç сукмаксем пур. Вăл сукмаксене хăшпĕр çынсем çеç пĕлеççĕ.

Çутăлса, курăна пуçласан тин Шчетинкин хăйĕн отрйачĕпе аташса, йăнăш çулпа кĕрсе кайнине чухласа илчĕ.

— Стой! Чарăнăр, йулташсем. Епĕр йăнăш çулпа кĕрсе кайнă. Кам чухлать, — хăш вырăнта епĕр? Мана пирĕн отрйад Абакан лачаки ункине çитсе кĕнĕ пек туйăнать, — терĕ вăл, виçĕ тавлăк пĕр хĕлхем çисе курман, хĕç пек çӳхелнĕ тимĕр кăвак ăйăрне чарса. Айăрĕ те аташса йăнăш çулпа кĕрсе кайнине сисрĕ пулас: пуçне çĕклерĕ те, хăлхисене тăратса, унтала-кунтала пăхкаласа илчĕ.

— Тĕрĕс, Шчетинкин йулташ, пирĕн отрйад лачака ункине çитсе кĕнĕ. Малала кайма çул çук. Кĕнĕ йĕрпе калле тухмасан, епĕр ку лачака ункинчен нихçан та тухас çук. Малала кайсан та, айккинеле пăрăнсан та, лашапа та, çуран та каçма вырăн çук. Пирĕн йĕри-тавра—кĕсел пек хумханса тăракан лачака. Ку лачака ункинче сахалах мар охотниксем, приискателсем аташса кĕрсе, тухаймасăр пĕтнĕ,—терĕ Черемховски шахтинчен пынă шахтӧр, партизан Трусăв.

Шчетинкин Трусăвăн куçĕсенчен шăтарас пек пăхса илчĕ те кăшт шухăшласа кайса ларчĕ. Унтан айĕнчи ăйăрĕн пĕкĕ пек авăнчăк мăйĕнчен аллипе çупăрласа:

— Çук, Трусăв йулташ, кĕнĕ йĕрпе калле тухма йурамасть: хăрушă, мĕншĕн тесен шуррисем пирĕн отрйад лачака ункине кĕрсе кайнине сиссен,

епĕр калле тухасса сыхласа, отрйада пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ. Пĕтĕм вăйа хурса пуç-тарнă отрйада салатса йарсан. çĕнĕрен пуçтарасси пит йăвăр.

— Курăпăр. Кĕнĕ йĕрпе каймасан, ăçтан йерт-се тухăн отрйада? — çилленсе, пăрăнса кайрĕ Трусăв.

— Йури улталаса йертсе кĕнĕ пуљ пире ку лачака ункине. Отрйадра шуррисен шпионĕ пур пулĕ, — мăкăр-мăкăр калаçни илтĕнчĕ партизан-сен хушшинче.

— Ан хăрăр. Отрйадра нимĕнле шпион та çук, йулташсем. Çĕр питĕ тĕттĕм пулнипе хамăрах йăнăш кĕрсе кайнă, — тесе лăплантарчĕ Шчетин-кин партизансене хăйĕн йаланхи ăшă сăмахĕпе.

— Шчетинкин йулташ. Епĕ ку лачака ункинчен тухма сукмак пĕлетĕп. Анчах хаљ хăш вырăнта иккенне кăшт маннă. Чухласа илейместĕп. Есĕр мана шанатăр пулсан, епĕ малтан разведкăна кай-са килем. Вара пĕтĕм отрйадпа тухăпăр, — терĕ партизан Макар.

Макар çурта пек йаштака пӳлĕ, маттур йĕкĕт. Унăн çаврака тулли куç шуррисем, çĕр çывăрма-сăр çӳренипе, сарăхнă. Вĕсем ылттăн тĕслĕ, сап-сарă курăнаççĕ. Питçăмартийĕсем тин пиçсе çит-нĕ панулми пек,—таса, хĕрлĕ. Макар тăваттăмĕш çул ĕнтĕ пĕр канмасăр вăрçăра çӳрет. Малтан вăл Германи вăрçинче икĕ çул çӳресе тавăрăннă. Унтан килсен, пĕр ерне пек пурăнсанах, Колчак çарне тытса кайнă. Унта нумай çӳремен. Шчетин-кин отрйадне тарса пынă. Партизан отрйадĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ тайга тăрăх выçăлă-тутăлă, çĕ-тĕк çатăк тумтирпе, ерни-ернипе çывăрмасăр, уйăхĕ

уйăхĕпе пит-куçне çумасăр, Колчакăн каратĕлни отрйачĕсемпе çапăçаť. Партизана кашни сехетре, кашни минутра, кашни çекундăра — малта та, хыçалта та вилĕм сыхласа çӳрет. Анчах, мĕнле сыхласан та, Макарăн мăйĕнчен çавăрса тытса, пусса ӳкерейместь. Макар вилĕме парăнмасť. Хăрамасť. Вăл паттăр. Çăмăл ĕç мар вăл пуйансемпе çапăçасси, вĕсене çĕнтересси.

Макар çамрăк-ха. Тутисемпе йанаххине тин мăйăх-сухал сăраť пулсан та, вăл нумай пурăннă, нумай илтнĕ, нумай пĕлет, нумай тӳснĕ. Малта татах та нумай-ха курмали, илтмели, пĕлмели, тӳсмели. Макарăн пурнăçĕ тин пуçланаť-ха.

Салтака кайиччен Макар тĕрлĕ приискă-шахтăсенче ĕçлесе пурăннă. Кунта тĕрлĕ çын пулнă,— аванни те усалли те. Шахтă хуçисем рабочисен кулďтурлăхĕшĕн тăрăшман, çавăнпа та ĕçлекенсенчен хăш-пĕрисем пушă вăхăта ерех ĕçсе, картла выďаса, хĕрарăмсен хыçĕнчен хăваласа иртернĕ, тепĕр чухне вĕсем айăпсăр çыннах тыта тыта хĕненĕ. Макар та вĕсенчен йулман, вăл та çавăн пекех ирсĕр хăтланнă.

Макар çак Абакан лачакинче ерни-ернипе, уйăхĕ-уйăхĕпе ылттăн çуса выртнă. Кунта вăл урлă та, тăрăх та, ăçтан кĕмели, ăçтан тухмали сукмаксем тăрăх каллĕ-маллĕ сахалах мар утнă, чупнă. Çавăнпа та Макар çак лачака ункине хăй алли иçнчи пӳрнисем пек таса пĕлет.

Макар тĕнчере çирĕм улттăмĕш çул çеç пурăнаť. Тӳррипе каласан, вăл хăй ку тариччен мĕншĕн пурăннине те пĕлмен. Уншăн ерех, табак, карт, хĕрарăм, çапăçу, ирсĕр сăмахсем пулсан çитнĕ.

Çак малта кăтартнă пурнăçшăн Макар ылттăн çеç мар, чунне пама та хатĕр пулнă. Шеллемен.

Еççе ўсĕрĕлсе, урнă йытă пек, кампа лекнĕ, унпа çапăçса çўренипе Макар икĕ малти шăлĕсене çухатнă. Хăй ылттăн чавакан пулсан та, Макар хуть çав шăлĕсене те ылттăнтан лартттарайман. Малти шăлĕсем çуккипе, калаçнă чух çăварĕнчи хĕрлĕ чĕлхи каллĕ маллĕ пăтранни курăнать. Сăмахĕсем вара тĕрĕс тухмаççĕ. Шăлсăр карчăк пек вăл: С, Ç саспаллисем вырăнне, Ш калать. Сăмахĕсем селĕп тухнинчен Макар хăш чух вăтанать пулас. Ун пек чух вара Макар, катăк шăлĕсене тутисемпе хупласа:

— Колчака çĕнтерсе, вăрçă пĕтсен, каллех ылттăн çума пуçласанах, пуринчен малтан шăлсене ылттăнтан ларттаратăп,—тесе мухтанать партизансен умĕнче. Йўратать Макар хăйĕн йулташĕсем умĕнче мухтанма. Вăхăт-вăхăт кăшт суйма та пултарать. Çавăнпа та отрйад пуçлăхĕ Шчетинкин Макар çине пит шансах каймасть, мĕншĕн тесен Макарăн халĕ те айăпĕсем пур: вăл, час-часах тўррипе мар, суйасшăн тăрăшать. Шыва кĕрсен те типĕ тухасшăн хăтланать. Анчах суйма та пĕлмест, суйнă çĕртех суйи тухса пырать.

Макар разведкăна кайса пĕр-пĕр йала çитсе лексен, чи малтан, ĕçне тăвиччен, хăйулăрах пуласшăн, сăмогон тупса ĕççе хĕрет. Унтан хĕрарăм тупса йăпанать. Ĕççе, хĕрарăмсемпе асса çўренĕшĕн Макар çинчен йалти хресченсем темиçе хут та Шчетинкина кала-кала панă ĕнтĕ. Çавăн пирки Шчетинкин Макара пĕрре çеç мар: асса ан çўре,— тесе каланă. Çук, Макар хăйĕнне пăрахмасть. Ерехпе хĕрарăмсем Макарăн çамрăк чĕрине астараççех.

Анчах мĕн каласан та, отрйадра Макарăн усал-
линчен ырлăхĕ нумайрах, мĕншĕн тесен вăл раз-
ведкăна кайсан, ĕçне тумасăр, нимĕн пĕлмесĕр
çавăрăнман. Макаршăн, йепле йăвăр пулсан та,
вăл йаланах шуррисем ăçта, хăш вырăнта, хăш
йалта тăнине, мĕн чухлĕ вăй пуррине, мĕнле хĕçпă-
шаллине тĕплĕн пĕлсе таврăннă Макар раз-
ведки хыççăн отрйад пĕр шикленмесĕр вырăнтан-
вырăна куçма пултарат. Çак йенчен пăхсан вара,
Шчетинкин Макар çине хăй çине шаннă пекех
шаннă.

Шчетинкинăн Макар çине шанмали сăлтавĕ те
пулнă. Вĕсем вĕт иккĕш те пĕр йăхран, пĕр клас
çыннисем. Пĕри—ылттăн çăвакан приискатĕл ывă-
лĕ, тепри çĕр кăмрăкĕ чавакан шахтор ачи. Вĕ-
сем пĕр хĕвел çуги айĕнче, пĕр хĕрлĕ йалав тыт-
са, Çĕпĕр тайгипе хирĕсем тăрăх Раççей патши
пуласшăн тăрăшакан Колчак çарне хирĕç тăрса
çапăçаççĕ.

Хут те мĕн чухлĕ хурласан та, мухтасан та,
çапах Макар иккĕмĕш çул ĕнтĕ суйа тĕнчене çĕ-
мĕрсе тăкса, çĕнĕ, чăн-чăн тĕнче тăвасшăн ви-
лĕмрен хăрамасăр, выçăлă-тутăлă, чĕп-чĕрĕ йунпа
пĕвĕнсе çапăçат. Хăйшĕн анчах мар, пĕтĕм Раç-
çейри, Çĕпĕрти, Украинăри, Кавказри ĕçлекен-
семпе хресченсемшĕн тăрăшат.

Анчах çак суйа тĕнчене тытса тăракансем, çав
суйалăха çĕмĕрттересшĕн мар, пĕтĕм вăйĕсене
пуçтарса, вĕсем Макара хирĕç тăраççĕ:— Жулик
вăл. Ĕçет. Картла выљат. Хĕрарăмсемпе асат. Турра,
чиркĕве, пупсене хирĕç пырат,—тесе айăпласа, çă-
варĕсенчен кăпăк кăларса, кăшкăраççĕ, Мăнтăр,
кĕпшек пўрнисемпе Макар çине чăсса кăтартаççĕ...

Кам çине? Пĕр Макар çине çеç-и? Çук, пурин çине те, кам та кам çав суйа тĕнчене çĕмĕрсе, çĕнĕ тĕнче тăвасшăн, çавсем çине.

Ех, хăйсем, хăйсем мĕн хăтланаççĕ! Ăна курмаççĕ, пĕлмеççĕ теççĕ пуљ пире. Кам вĕрентнĕ çав Макара ĕçме, картла выљама, хĕрарăмсемпе асма? Есĕр мар-и, суйа тĕнчене тытса тăракан жулик-шарлатансем, тĕнче ултавçисем?

Макар, Иван, Макçăм, Ваçилисем çав суйа тĕнчене тытса тăракан ултавçăсене çĕнтересшăн çапăçаççĕ. Çĕнтересси инçе мар. Анчах унччен нумай вăй кирлĕ, нумай ĕçхалăхĕпе хресченсен йунĕ тăкăнĕ.

Шчетинкин Макар çине, хăйĕн тăван шăллĕ çине пăхнă пек, пăхса илчĕ.

— Разведкăна, Макар, есĕр Фроловпа иксĕр кайăр. Отрйада кăлармали çула тĕплĕн пĕлмесĕр калле ан çаврăнăр. Йала-мĕне çитсе лексен, ĕçсе, асса ан çӳре. Йулашки хут астутаратăп,—кайран хресченсем мĕн те пулин каласси ан пултăр. Ун пек, кун пек пулас пулсан, малашне ман отрйада йулăп тесе ан та шутла. Отрйад йатне те çĕртсе ан çӳре. Илтрĕн-и?.. Тата шуррисен отрйачĕ хăш йалта тăрать, мĕн чухлĕ унăн вăйĕ, çавна пĕлсе таврăнăр. Анчах нумай ан çӳрĕр. Пит нумай çӳресен—çур сутка. Ăнлантăр-и?—начаљникле хушса каларĕ Шчетинкин...

Макар Шчетинкин сăмахĕсемпе пĕтĕмпех килĕшрĕ. Хирĕç чĕнмерĕ. Йаланхи пек, пуçне çеç тайрĕ. Макар нумай калаçмасть. Анчах мĕн хушнине тĕплĕн тума тăрăшать.

Разведкăна кайакансемпе калаçса пĕтерсен, Шчетинкин ытти партизансен йенне çаврăнса тăчĕ.

— Лашăрсем çинчен анса, вĕсене курăк çине çиме йарăр. Кирлĕ вырăнсене хуралсем тăратăр!— тесе приказ пачĕ.

Партизансем çавăнтах лашисем çийĕсенчен сике-сике анса, çăварлăхĕсене кăларса тăм ӳкнипе сарăха пуçланă вăрăм курăк çине йачĕç. Хăйсем ушкăнăн-ушкăнăн канма ларчĕç, хăшĕсем курăк çине чăсăлса выртрĕç.

Макарпа Фролов виçĕ тавлăк ҫитсрмен выçă лашисене майĕпен уттарчĕç. Вĕсене Шчетинкин, курăнми пуличченех пăхса тăрса, ăсатса йачĕ.

II

Йĕри-тавра вăрман кашласа ларать. Нӳрлĕ лачака шăрши сăмсана çурать. Кĕрхи шăнасем вилес умĕн аран-аран нăйласа вĕçеççĕ. Çентябĕр хĕвелĕ майĕпен кăнтăрланала кармашать. Лаша ури айĕнче кĕрхи курăк чаштăртатать. Макарпа Фролов лачака тăрăх тăвăр сукмакпа пыраççĕ. Макар малта, Фролов кайра. Иккĕшĕ те вĕсем çын илтмеле мар пăшăл-пăшăл калаçаççĕ. Çапла калаçса пынă çĕртрех сисмен те, лачака ункинчен тухса та кайнă. Малта, инçе те мар, мечĕтлĕ тутар йалĕ курăнать.

— Пăх-ха, пăх, Макар. Йала çитсе тухрăмăр. Мĕнле йал вăл, пĕлетĕн-и?— савăнăçла кăшкăрса йачĕ Фролов.

— Кăшлав вăл, тутар йалĕ,— кĕскен пĕлтерчĕ Макар.

— Аттă, кĕрсе апатланса тухар, манăн пит çийес килет. Санăн йепле?— терĕ Фролов.

— Епĕ те вĕт санпа пĕрлех виççĕмĕш кун çимен. Кĕресси кĕрĕпĕр те, йуланутпа мар, çуран. Ку

йалта шуррисен отрйачĕ тăма пултарать, мĕншĕн тесен кунта тайга хĕрри. Пуйан йал вăл Кăшлав— терĕ Макар, ун-кун пăхкаласа.

—Апла лашасене ак çак кукăра кўртсе кăкарса хăваратпăр та, хамăр çуран кĕретпĕр—тесе, Фролов утланнă лашин пуçне пĕр çăра хурăн вăрмане йенкеле пăрса уттарчĕ.

Вăрман патне çитсе пынă чух, сасартăк тăвата йуланут, лашисене казакла йăкăлт-йăкăлт сиктерсе, пырса та тухрĕç.

—Лекрĕмĕр. Ав, шуррисен разведки,—тесе хăранă сассипе кăшкăрарах каларĕ Фролов.

—Чăнах. Аттă, ан йўл ман хыçран,—терĕ Макар, çĕлен пек авкаланса утакан çўрен лашине карт туртса. Лаши çавăнтах мăйне хур пек чăсса хучĕ те, тапса сикрĕ. Ун хыçĕнчен Фролов сиктерчĕ. Хыçĕсенчен пылчăк çеç çĕкленсе йулчĕ. Вĕсене курсан, шуррисем те лашисене хистесе сиктере пуçларĕç:

—Стой! Чарăнăр!—кăшкăра пуçларĕç хыçалтан. Унчен те пулмарĕ,йĕркесĕр пăшал сассисем пĕррин хыççăн тепри кĕрлесе те кайрĕç.

—Ай!—хайаррăн кăшкăрса йарса, лаши çинчен кĕлте пек сирпĕнсе ўксе йулчĕ Фролов. Лаши, аçа-çиçĕм пек Макартан иртсе, килнĕ çулпа вĕçтерчĕ.

Макар лаши мăйĕ çумне сăвăс пек çыпăçса выртрĕ те, шуррисенчен хăтăласшăн, лашине урисемпе хĕстерсе хăвала пуçларĕ. Шуррисем пăшалĕсене кĕрлеттереççĕ, пуљăсем, кĕркуннехи шăнапăвансем пек, тĕрлĕ сасăсемпе нăйласа ирте-ирте кайаççĕ. Ав, инçе мар, малта, тайга вăрманĕ, унта кĕрсен Макар хăтăлать. Çавăнпа вăл лашине, йулашки вăйне хурса, хистет. Сасартăк çил пек вĕç-

се пыракан лаша, малти ури çине такăнса, çăмха пек пĕтĕрĕнсе анчĕ. Макар, лаши мăйĕ урлă сирпĕнсе, ик-виçĕ хăлаçа кайса ӳкрĕ.

Шуррисем, çавăнтах тапăртаттарса çитсе, Макара çавăрса та илчĕç. Анчах Макар вĕсене часах парăнмарĕ: пĕр салтакне сăмси урлă çапса йун кăларчĕ, иккĕмĕшне çӳхе çĕртен урипе тапса ăнтан йачĕ, виççĕмĕшне кăкăрĕнчен çапса антăхтарчĕ. Тăваттăмĕшне те çапма тăнăччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ, леш, пĕтĕм вăйĕпе ахлатса, Макара тăнлавран пăшал кучĕпе çапрĕ. Вара Макар, вăкăр пек мĕкĕрсе, çĕре чăсăлса ӳкрĕ. Унăн тăнĕ çухалчĕ...

III

Çав тери витĕрĕн шăнса, сивĕ тытнă пек пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе чĕтресе сике пуçласан тин, Макар тăна кĕчĕ. Вăл, куçне уçса, пуçне çĕклесе пăхрĕ. Йĕри-тавра хăйне тытнă салтаксем кăшкăрашса тăнине курчĕ. Кăкăрĕ çинче тем пысăкĕш пăр кайăкĕ выртать. Мĕн пулнине Макар хăй те ăнланса илеймест. Кăшт шухăша кайса выртсан-выртсан тин Макар хайар сассипе:

— Кайăр кунтан! Есĕр мана шăнтса вĕлерес тетĕр-им! — кăшкăрса, кăкăрĕ çинчи пăр татăкне айккинеле сирпĕтсе йачĕ. Унтан хăй сиксе тăрса ларчĕ. Тăнлавĕ, çĕçĕпе чикнĕ пек, йăш-йăш чикет. Хыпаласа пăхрĕ, — чăмăр пысăкĕш мăкăль сиксе тухнă.

— Ха-ха-ха! Хĕрлĕ куштанăн ăнĕ кĕчĕ, — ахăлтатса кулса йачĕç салтаксем.

Макар тин ăнланса илчĕ — ăна шуррисен салтакĕ пуçĕнчен пăшал кучĕпе çапса ăнтан йанă мĕн. Халĕ вĕсем Макара йала илсе килнĕ те, ăнне кӳртесшĕн, кăкăрĕ çине пăр хурса шăнтаççĕ.

— Ах, шуйтансен аллисене çитсе лекнĕ вĕт епĕ, ухмах. Мĕнле хăтăлас? Мана вĕлернипе вĕсем нимĕн усă та курас çук та, анчах отрйад.. Отрйада шел. Унта пилĕкçĕр çын ытла. Вĕсем выçă. Лачака ункинчен тухма çул пĕлмеççĕ, — шухăшласа илчĕ Макар. Унтан ури çине майĕпе тăчĕ.

— Ăна кĕрсе çитрĕ. Мĕн тăватăр ĕнтĕ унпа малашне? — терĕ пĕр урлă мăйăхлă, çара йанахлă салтак, Макар çине кăтартса.

— Халех штаба леçес. Унта его высокороди, мĕн кирлине ыйтса тĕпчесен, ăçта хумалине кăтартса парĕ,—терĕ шĕвĕр сăмсалă фелдфебĕл.

Çара йанахлă салтакпа фелдфебĕл иккĕшĕ те пĕр сăнлă. Ун пек, пĕр тăван пулсан та, капла пĕр пек пулас çук. Вĕсене çак йенчен çеç уйăрма пулать: пĕрин хулпуççийĕсем çинче рйадовой салтак погонĕсем, тепри фелдфебĕл погонĕсем çакнă.

— Мĕн чухлĕ тĕпчесен те, епĕ сире пĕр сăмах та калас çук. Анчах чăтма йăвăр. Мĕнле хăтăлас? Ну, Макар Куçмич, пĕрре вĕсен аллине лекрĕн-тĕк,—виличчен тўс. Вĕлерсен те пĕр сăмах тĕрĕссине ан кала. Есĕ вĕт хăвăншăн вилместĕн— пĕтĕм отрйадшăн. Унта пилĕк çĕр çын, вĕсем лачакаран тухма çул пĕлмеççĕ,—каллех шухăшласа илчĕ Макар.

— Ăна хиртенех илсе килмеле марччĕ. Çавăнтах вĕлерсе хăвармалаччĕ. Халĕ çўре ĕнтĕ ун хыçĕнчен сыхласа,—тесе, вăрçса илчĕ виççĕмĕш салтак.

— Йулташсем, есĕр мана штаба илсе кайиччен, çитерсе тăрантарсан питĕ аван пулĕччĕ. Тутă хырăмпа калаçма авантарах. Епĕ выçă. Виççĕ-


28161-чув.
библиотека
М. ГОРЬКОГО

мĕш кун ĕнтĕ çимен,—терĕ Макар хуллен, кăшт йăлăнна пек пулса.

— Молчать! Ăçтан епĕр сан йултăшу пулатпăр? Есĕр вĕт Раççейе сутнă. Анчăк çури!—сăнчăрти йытă пек хар кăшкăрса пăрахрĕ фелдфебĕл.

— Есĕ ан çиллен-ха епĕ сире „йулташсем" тенĕшĕн. Йăвăш каларăм. Тĕрĕс, сирĕнпе епĕр йулташлă пулма пултараймастпăр, есĕр капиталиссемшĕн кĕрешетĕр, епĕр ĕçхалăхĕпе хресченсемшĕн, господин фелдфебĕл. Çапах та есĕр мана, выçă хырăмпа мар, çитерсе тăрантарса вĕлерме тивĕçлĕ, саккун çапла,—терĕ Макар, кăшт мăшкăланă пек пулса.

— Молчать! Манпа калаçма-и-ха есĕ? Епĕ кам? Есĕ йана пĕлетни?—каллех, урине тапса, тулхăрчĕ фелдфебĕл.

— Ха-ха-ха! Пĕлетĕп есĕ камне, Колчак йăтти,—ухмаха йернĕ пек ахăлтатса кулса йачĕ Макар.

— Парас пĕрер татăк çăкăр. Ан тив, çитĕр. Уншăн çылăх пулмĕ. Йепле пулсан та, çын вĕт вăл, йăтă мар,—терĕ çара йанахлă салтак.

Фелдфебĕл, ним тăвайман йенне, мăйăхне çăварне хыпса чăмлама пуçларĕ.

— Парăр еппин йăтта пĕрер татăк. Çитĕр те, унтан халех штаба илсе пырăр. Епĕ, малтан кайса, его высокородие систерем. Хатĕрлесе тăтăр. У-у... Сволăч!—фелдфебĕл Макар çине усал куçĕсемпе çавăрăнса пăхрĕ те штаб йеннеле васкаса утрĕ.

Çара йанахлă салтак хăйĕн сăран сумкинчен пĕр пысăк чĕлĕ ыраш çăкăрĕ кăларса Макара пачĕ.

Макар, çăкăр чĕлline илсе, тав турĕ. Унтан пуçне тайрĕ те, çăвар тулли çырта-çырта, чăмла пуçларĕ...

Çийĕсене акăлчан шинелĕсем, пуçĕсене француз картусĕсем, урисене америкă пушмакĕсем тăхăннă икĕ салтак. Макар çине капкăна лекнĕ кашкăр çине пăхнă пек, вăл типĕ çăкăр касăкне усал куçĕсемпе пăхса, аллисенчи пăшалĕсене хатĕр тытса тăраççĕ. Макар, тарас тесе, кăшт çеç вырăнĕнчен хускалсанах, халех персе йĕ чиксе пăрахма хатĕр. Макара çăкăр панă виççĕмĕш салтакĕ лешсем пек мар, вăл ун çине йăшă куçĕсемпе пăха-пăха илет. Пăхнă май сылтăм куçне кăшт хĕсет, пăшалу пек хулăм тутисене йăл култарать...

Макар çара йанаха куçĕсене илмесĕр пăхать. „Те хĕрхенет ку мана Колчак йăтти, те мăшкăласа кулать",—тесе шухăшлать вăл хăй ăшĕнче.

— Ей! Тыткăна лекнине илсе килĕр хăвăртрах!— пырĕ тĕпне хыртарса кăшкăрчĕ фелдфебĕл штаб умĕнчен.

— Ну, çисе тăрантăн пуль. Тăр. Айта, ут ман хыçран,—терĕ çара йанах Макара.

— Тавтапуç, йулташ. Ах, каллех йăнăш каларăм. Каçар, господин салтак,—тесе ури çине тăчĕ Макар.

— Мана йулташ тесен те пырать. Епĕ фелдфебĕл пек доброволĕц мар, мобилизованнăй, рйадовой салтак çеç,—ответлерĕ те салтак штаб йеннеле утрĕ.

Макар, ним чĕнмесĕр, пуçне чиксе, çара йанах хыçĕнчен утăмларĕ. Макарăн ик айаккинче икĕ салтак, виççĕмĕшĕ хыçалта пăшасене Макар йеннеле тытса, пырать.

— Малтан епĕ камне, хăш партизан отрйадĕнче пулнине ыйтса тĕпчĕç. Епĕ пĕр сăмах та каламăп. Вара... Вара мана йе персе, йе штыкпа чиксе, йе йупа çине çакса вĕлерĕç. Унтан... Унтан ман ӳте выљăх вилли пек анкартисем хыçне кăларса пăрахĕç... Çапла мана йăтăсем, кашкăрсем, çăхансем, татăкăн-татăкăн çăлса, çисе пĕтерĕç. Йулашкинчен шăмăсем çеç, ăçта пăхнă, унта йăванса выртĕç. Ех, вилĕм. Мĕн вăл вилĕм? Маншăн ним те мар. Епĕ вилĕп те пĕтĕп. Нимĕн те пĕлмĕп, илтмен, курман. Анчах отрйада шел. Унта пилĕк çĕр çын ытла. Вĕсем лачака ункинчен тухма çул пĕлмеççĕ. Выçă...

Çапла Макар тарăн шухăша путса утаĭ. Вăл вилĕмрен хăрамасĭ. Унăн пĕтĕм шухăшĕ те отрйад çинчен. Май пулсан, вăл халех çак хăйне сыхласа пыракан салтаксене виççĕшне виçĕ çĕре çапса йăвантарĕччĕ те отрйад патне чупĕччĕ. Анчах салтаксем пăшалĕсене тĕллесех пыраççĕ. Вĕсен хăрушă штык вĕçĕсене кура, Макар каллех, пуçне лашт чиксе, ункă пек çавăрăнса илнĕ виçĕ салтак хушшинче пыраĭ.

## IV

Шуррисен штабĕ мечĕтпе йунашар ларакан мулла çуртĕнче. Алăкран кĕрсенех пĕр пысăк пӳлĕм. Пӳлĕм вăта çĕрĕнче çаврака сĕтел; сĕтел йĕри-тавра хыçлă тенкелсем. Çтена çумĕнче диван лараĭ. Çав диван çинче, пуçне çӳлеле каçăртса, çăварне пирус хыпса, йанахне сухал сăрма пуçланă çамрăк прапăршчик лараĭ. Ун умĕнче, кăкăрне малала каçăртса, пуçне тĕве пек çӳлеле çĕклесе, фелдфебĕл тăраĭ. Вăл хăйĕн начаљникне

Макара тытса пыни çинчен мухтанарах каласа парать:

— Пĕччен тăватă çынна парăнасшăн мар, вашĕ благороди. Пуçĕнчен пăшал кучĕпе çапсан тин парăнчĕ...

— Молодец! Сана уншăн хĕрес памала тăвăп,— мухтать прапăршчик фелдфебĕле.

Фелдфебĕл, маччана çитсе лекес пек, çӳлеле туртăнать.

Макара илсе кĕчĕç. Прапăршчик ун çине, ури тупанĕсенчен пуçласа пуç тӳпине çитичченех, пăхса тухрĕ те кăвас икерчи пек тутисене кăшт култаран пек турĕ.

— Хе-хе-хе!—Есĕ пулатни-ха вăл Шчетинкин бандит отрйачĕн разведчикĕ?

Макар кăшт шухăша кайса тăчĕ.

— Пĕлетним? Пĕлсен, ыйтма та кирлĕ мар,— терĕ Макар, прапăршчик куçĕсенчен шăтарас пек пăхса.

— Лайăх. Пит лайăх. Анчах есĕ ан хăра. Тӳррипе каласан, епĕ сана нимĕн те тăвас çук. Халех ирĕке йарăп. Анчах епĕ мĕн ыйтнине пурне те ним суймасăр каласа пар. Йурать-и?..

Макар прапăршчике хăйĕн пуçланă сăмахĕсене каласа пĕтерме памарĕ.

— Епĕ санран ирĕк ыйтмастăп. Ыйтсан та, есĕ мана ăна парас çук. Епĕр ирĕке сирĕнтен хамăр алăсемпе вăйпа туртса илесшĕн. Пĕр хамшăн анчах мар,—пĕтĕм Раççейри, Çĕпĕрти, Украинăри, Кавказри рабочисемпе хресченсемшĕн,—терĕ вăл прапăршчик сăмахне татса.

— Сирĕн отрйад ăçта, хăш вырăнта тăрать? Кала тӳррипе,— ыйтрĕ прапăршчик.

— Ха-ха-ха! Ăçта? Çĕрпе пĕлĕт хушшинче,— кулса йачĕ Макар.

Халĕ çеç тилĕ пек йăпăлтатса калаçакан прапăршчик сасартăках çиленсе ÿкрĕ.

— Ах, мерзавĕц. Есĕ манпа—офицерпе—чиперрĕн калаçасшăн мари-ха. Епĕ сана калаçтарăп. Калаçмасан, чĕлхÿне касса илĕп. Тирне чĕрĕле сĕвĕп. Кала,—хăш вырăнта тăрать сирĕн отрйад?— тўсеймесĕр ури çине сиксе тăчĕ вăл.

— Епĕ сан аллунта, мĕн тăвас тетĕн, çавна тума пултаратăн. Епĕ санран каçару ыйтмастăп. Отрйад ăçта тăнине каларăм: çĕрпе пĕлĕт хушшинче,—терĕ Макар.

— Илсе тухса кайăр йăтта. Куç умĕнчех măшкăлать,—фелдфебĕл çине пăхса кăшкăрчĕ прапăршчик.

— Так точнă. Итлетĕп, вашĕ благороди. Анчах ăçта хурас? Мĕн тăвас унпа?

Фелдфебĕл, урисене шартлаттарса çыпăçтарса, мăйне прапăршчик йеннеле кăркка пек чăсрĕ.

— Ăçта хурассине, мĕн тăвассине пĕлместĕн-им? Ех, сволăч. Есĕр çак бандит пек çирĕп пулсан, епĕр вĕсене тахçанах çĕнтернĕ пулăттăмăр. Шкурниксем çеç есĕр. Хăвăрăн тирĕрсене çеç сыхласшăн есĕр. Çветуй вырăс Раççейĕшĕн ним чухлĕ тăрăшмастăр. Мĕншĕн сĕтĕрсе килтĕр есĕр ăна ман пата? Унăн кашкăр сăнне кăтартма-и?

— Ан хăра, прапăршчик, епĕ кашкăр мар, чăнчăн партизан. Бандит йатне мана ан пар, ху çине ил,—терĕ Макар, прапăршчика пўлсе...

—Так точнă, пĕлетĕп, вашĕ благороди, ăçта хумалине. Ахаль çеç ыйтрăм,—терĕ фелдфебĕл.

—Пĕлетĕн пулсан мĕн ыйтса тăратăн тата.

Марш. Халех илсе тухса кай. Ӳлёмрен кун пеккисене ман пата ан илсе килнĕ пултăр. Илтрĕн-и?

— Так точнă, илтрĕм. Шагом марш, ман хыçран, — командă пачĕ фелдфебĕл, Макар çине пăхса...

Шăп çав вăхăтра:

— Смир-нă-ă! — командă йантраса кайрĕ урамра. Çавăнтах:

— Здорово, орлы!

— Здравия желаем, — йăтăла вĕрсе йачĕç салтаксем.

— Стой! Ан илсе тух. Кăпитан Могиљникăв килет. Вăл калаçса пăхтăр-ха тата унпа, — терĕ прапăршчик, фелдфебĕле чарса...

Сарă алăк йар уçăлчĕ. Упа пек мăнтăр, кĕске мăйлă, лутра, хырнă йанахлă, хĕрлĕ сăнлă кăпитан Могиљникăв пырса кĕчĕ.

— Смирнă!.. кăпитан умне хăвăрт утса пырса рапăрт пачĕ прапăршчик.

— Здравствуйте!

— Хав-хав-хав! — харăс ахăрса йачĕç штабри салтаксем.

— Кăпитан, тĕпелеле иртсе, Макар çине чалăшшăн пăхрĕ:

— Ку кам? Мĕнле çĕтĕк-çурăк?

— Тыткăна лекнĕ бандит, господин кăпитан, — пĕлтерчĕ прапăршчик.

— Ех-е-е!.. лекрĕн-им, голубчик... Ыйтса пĕлтĕр-и? Мĕн калаçать? Хăш бандă отрйадĕнчен?

— Ыйтса пĕлесшĕн пултăм та, калаçасшăн мар. Куç умĕнчех мăшкăлать, господин кăпитан, — терĕ прапăршчик.

— Мăшкăлат? Ах! сволăч.—Есĕ вырăс офицерĕнчен кулма-и-хă... Ак сана!—пĕтĕм вăйĕпе Макарăн йанах шăмминчен чышрĕ кăпитан.

Макар шăлĕсене шарт çыртрĕ. Сасартăк çыртнипе, чĕлхине ыраттарчĕ пулас, çăварне аллипе тытса, сурчăкне шалала ĕмсе илчĕ. Тўсеймерĕ Макар. Аллине чăмăртаса, кăпитан çине сăмси тăрăх пăхса илчĕ те:—Кучченеçе хирĕç—кучченеç. Ме, тыт! тесе, мăлатук пек чăмăрне кăпитанăн лапчăкрах сăмси урлă хучĕ. Кăпитан, аллисемпе питне хупласа, диван çине кайса ларчĕ. Çăвăнтах йанаххи тăрăх йун йухса анса, урайне тумла пуçларĕ.

Прапăршчик, васкаса, наганне туртса кăларчĕ. Макар çине тĕллерĕ. Анчах персе ĕлкĕреймерĕ, çав вăхăтрах тепĕр пўлĕмрен такана пек сарлака хырăмлă мулла, чупса тухса, прапăршчик умне пырса тăчĕ:

— Господин офицер. Господин, дома убивать нельзя. Крех большой. Улица можно убивать... Кровь, пол мараешь. После жить не хорошо. Большевик пахнит будет...—терĕ.

— Фу, сволăч. Турă качакисен кĕтўçи. Кансĕрлесе çўретĕн,—вăрçса тăкрĕ прапăршчик муллана.

Кăпитан, йунлă сăмси-çăварне тутăрпа шăлса, хушу пачĕ:

— Малтан шомпăлпа çирĕм пилĕк хут çапăр. Унтан пăрлă нўхрепе хупса лартăр. Ытла хайар, кăшт йăвашлантăр. Вĕлерме ĕлкĕрĕпĕр. Малтан отрйачĕ ăçта тăнине каласа патăр. Каламасан, тирне йĕппе сĕвĕпĕр. Илтрĕр-и?..

— Так точнӑ, илтрӗм, господин кӑпитан, — терӗ прапӑршчик.

— Хушнисене халех ӗҫе кӳрг. Каҫхине ҫӗнӗрен ыйтса тӗпчӗпӗр. Епӗ канам-ха кӑшт, — кӑпитан тепӗр пӳлӗме кӗрсе кайрӗ.

— Фелдфебӗл, илтрӗн-и господин кӑпитан мӗн каланине? Марш. Халех илсе тухса кай, — терӗ прапӑршчик фелдфебӗле.

Макар прапӑршчик ҫине арӑслан пек сивӗ куҫӗсемпе ҫавӑрӑнса пӑхрӗ те, ним чӗнмесӗр, фелдфебӗл хыҫӗнчен утса тухрӗ. Ун хыҫӗнчен виҫӗ салтак утрӗҫ. Пӳлӗм пушанса йулчӗ.

## V

Вӑхӑт кӑнтӑрлахи апат тӗлӗ. Йалта автансем авӑтаҫҫӗ, хурсем какӑлтатаҫҫӗ. Каратӗлни отрйатӑн салтакӗсем, котолоксене шӑнкӑртаттарса, урам варринче ларакан кухңӑ патне чупаҫҫӗ. Ҫӑмӑр чарӑнмаст, вӑл майӗпен йӑслат...

Килкарти ӑшне тухса нӳхреп умне ҫитсен, фелдфебӗл Макара чарчӗ.

— Стой! Смирнӑ! Антар йӗмне. Вырт ҫакӑнта, — пӳрнипе ҫӗреле чӑсса кӑтартрӗ.

— Вӑйу ҫитсен, антар та вырттар. Хам йӗме хам антарсах, сана хӗнеттерме ухмаха йермен-ха епӗ, — терӗ Макар ҫиллӗн.

— Е-е-е-е... есӗ мана — начаљнике — пӑхӑнасшӑн мари-ха.. Епӗ сана пӑхӑнтарӑп, — хайаррӑн ахӑрса, пилӗк ҫинчи кӗске пӑшалне йарса тытрӗ фелдфебӗл...

— Есӗ маншӑн начаљник мар, — тӑшман. Акӑ ҫак кӑвак шинелсемшӗн ҫеҫ начаљник есӗ.

Салтаксем çавăнтах, Макара çавăрса тытса, йĕмне антарса выртарасшăн пулчĕç. Макар чылайч чен выртасшăн мар пулса кĕрешрĕ. Кĕрешсен-кĕрешсен, ывăнчĕ пулас, лăпланчĕ. Вара ăна çĕре чăсса выртарчĕç Унтан пĕр салтакĕ урисем çине, тепри ĕнси çине улăхса ларчĕ.

— Ну, Ваньушкин, кăлар шомпăлна. Çап çирĕм пиллĕк. Асту, ан шелле. Шеллесен хăна лекĕ,— терĕ фелдфебĕл пĕр салтакне.

— Ну, большевик, чăт, чăтсан утаман пулăн,— хайар сассипе кăшкăрса, аллинчи шомпăлне ўкерем пек турĕ салтак. Анчах хăй çавăнтах, Макар пуçĕ тĕлне шомпăлне илме пĕшкĕнсе: — Есĕ ан хăра, йулташ. Епĕ хытă çапмăп. Анчах епĕ çапмассерен ыратнă пек туса хайаррăн кăшкăр, — тесе хăлхинчен систерчĕ.

— Вара, ку хамăр çын вĕт. Капла хăтăлма та майсем пур,—тесе шухăшларĕ Макар.

Çара йанахлă салтак тепĕр хут: — Ну, чăт. Пĕрре... Иккĕ... Виççĕ... чăстарса суса, Макарăн çара ўчĕ çине шомпăлне ўкерет. Макар, ўчĕ çумне шомпăл çитсе тивмессерен, качака пек çухăра-çухăра йарать.

Фелдфебĕл айаккинчен пăхса тăрать. Савăннипе вăл: — Е-е-е... пăхăнăн-и! шăлне шатăртаттарать.

Макарăн урисемпе ĕнси çинче ларакан салтаксем, Ваньушкин шомпăлне çўлеле çĕклесе антармассерен, куçĕсене мăч-мăч хупа-хупа илеççĕ.

Ваньушкин, пĕтĕм вăйĕпе ахлатса çапнă пек:— Вуннă... вунпилĕк... çирĕм... йарăнтарса шутлать...

Çапла Макара, çирĕм пилĕк хут шомпăлпа çапнă хыççăн, пăрлă нўхрепе пăрахса, питĕрсе илчĕ фелдфебĕл.

— Ваҫушкин, есĕ хурал тăр. Епĕр апатланса килер. Унтан есĕ кайăн. Асту, ан тарт. Хытă сыхла...

— Итлетĕп, господин фелдфебĕл, — аллине картус сăмси ҫумне тытса чеҫ пачĕ Ваҫушкин.

Фелдфебĕлпе салтаксем пурте апата кайрĕҫ. Нӳхреп лаҫҫи умĕнче Ваҫушкин пĕччен ҫеҫ тăрса йулчĕ. Нӳхрепре тĕттĕм, нӳрлĕ, сивĕ. Урисем айĕнче пăр, ҫĕрĕк шăрши.

— Шăнтăн пуҫ, йулташ?—илтрĕ Макар сасартăк Ваҫушкин сассине.

— Шăнасса пит шăнман та, ҫапах сивĕ... Мĕкшĕн есĕ мана „йулташ"тесе чĕнетĕн? Епĕ саншăн ăҫтан йулташ пулам. Епĕр вĕт иксĕмĕр—тăшмансем,—терĕ Макар шалтан...

— Ех, йулташ. Есĕ мана каратĕлни отрйадра тăнăшăн тăшман тесе шутлатăн пуҫ. Ҫук, йулташ. Епĕ те сан пекех ҫын. Мана та хам ирĕкпе мар, вăйпă тытса килсе, салтак шинелĕ тăхăнтарчĕҫ те алла пăшал пачĕҫ. Халĕ ĕнтĕ хам пекех ĕҫлекенсемпе хресченсене пăшалпа персе, штыкпа чиксе вĕлерме, шомпăлпа ҫапма хушаҫҫĕ. Хушнине итлемесен, хама вилĕм сĕнеҫҫĕ. Такҫанах тарма шухăш тытнă, анчах нимпе те май тупаймастăп. Пĕр епĕ ҫеҫ мар кунта. Ман пеккисем татах та пур. Доброволĕцсемпе хутшăнтарса йанă та, ҫапкалан-са ҫӳретпĕр,—тесе хурлăхлă сăмахне пĕтерчĕ Ваҫушкин.

— Суймаст-ши ку тăшман. Йăпăлтатса калаҫса, отрйад ăҫта тăнине пĕлесшĕн мар-ши. Ҫук, апла тесен—ҫăкăр пачĕ, шомпăлпа ыраттармасăр ҫапрĕ. Тĕрĕс. Вăйпа салтака тытса килнĕ хресчен ывăлĕ пулмала,—тесе шухăшларĕ Макар.

Çав вăхăтра фелдфебĕл сасси йантăраса кайрĕ:

— Молчаť. Мĕншĕн тăшманпа калаçатăн. Кам хушрĕ сана? Çавăнтах тата: Ой! – кăшкăрса пĕр çын пĕвĕ çĕре лаплатса ӳкрĕ.

Нумайах та вăхăт иртмерĕ, çăра шăлтăр-шалтăр турĕ. Унтан нӳхреп хупăлчи хăвăрт уçăлчĕ.

— Тух нӳхрепрен! — кăшкăрчĕ фелдфебĕл улшăннă сассипе.

Макар, нӳхрепрен пуçне кăларсанах, инçе те мар пĕр салтак йун йухтарса йăванса выртнине курчĕ. — Ах, тăшман! Ваӈушкина вĕлернĕ вĕт ку, — шухăшларĕ вăл, йĕри-тавра çавăрăнкаласа пăхса.

## VI

Кĕрхи çăмăр йăслама чарăнмасť. Хутран-сигрен йалта ӳсĕр салтаксем йурлани илтĕнет:

Большевики—лодыри—
Всю Россию продали...

— Халех тыгкăна лекнине илсе килĕр. Живă, — кăшкăрчĕ штабран прапăршчик.

— Халех, вашĕ благороди, — сасă пачĕ фелдфебĕл. Унтан, Макар çине пăхса: — Смирнă. Аťа, уг ман умран, – терĕ.

Макар малтан, ун хыçĕнчен, наганне аллине тытса, фелдфебĕл утрĕ.

Фелдфебĕл Макара, штаба мар, урамала хуса тухрĕ. Урама тухсан, пăхаť Макар, — хапха тулашĕнче икĕ йĕнерлĕ лаша кăкарăнса тăраççĕ: пĕри çӳрен, тепри çĕлен-хура. Лашасене курсан, Макар пĕтĕм пĕвĕпе сиксе ӳкрĕ: – Ех, пĕрин çине утланасчĕ те, вĕçесчĕ, тесе шухăшларĕ. Унтан вăл хăйĕн хыçĕнчен утакан фелдфебĕл çине çаврăнса пăхма çеç пуçне пăрнăччĕ, сасартăк:

— Живă, утлан çак лаша çине! —хушрĕ фелдфебĕл, çӳрен лаша çине наганпа чăсса кăтартса.

Макар пĕр самантрах лаши çине партизанла сиксе утланса, чĕлпĕрĕнчен йарса тытрĕ.

— Ну, большевик, тарса хăтăлсан, сан телей. Хăтăлаймасан, хăна ху ӳпкеле,—терĕ фелдфебĕл, хура лаша çине утланма хатĕрленсе.

Макар пĕрре хăй утланнă лаши çине, тепре фелдфебĕл утланакан лаша çине пăхса илчĕ те:—Апла та, капла та пурĕпĕр вилĕм, тен хăтăлăп, — тесе шухăшласа илчĕ. Вара лашине, партизанла карт туртса, урисемпе хĕстерсе хучĕ те, малала ӳпĕнсе, чĕлпĕр вĕçĕпе çат çапрĕ. Лаши çавăнтах, çĕлен пек авкаланса, сиккипе малала вĕçтерчĕ. Макар лаша мăйĕ çумне çыпçăнса выртрĕ.

— Стой! Ăçта таратăн? Тыт, большевик тарать!— кăшкăрса йачĕ фелдфебĕл. Унтан наган сасси пĕр вĕçĕмсĕр йанрама пуçларĕ. Пульăсем Макар пуçĕ урлă, пăван пек сĕрлесе, ирте-ирте кайаççĕ.

Макарăн çан-çурăмĕ пĕрре шăнса, тепре вут пек пĕçерсе илет. „Лекмерĕç-ха, иртсе кайрĕç“, шухăшлать вăл, хыçалала çаврăнса пăхса. Курать— фелдфебĕл пĕр пилĕк хăлаç пек çеç хыçра лашине сиктерсе пырать. Макар, фелдфебĕлтен тарса хăтăласшăн пулса, лашине урисемпе тапăрлать, чĕлпĕрĕ вĕçĕпе çапать. Çук, фелдфебĕлтен нимпе те уйăрălса кайма çук. Лешĕ çавах, хыçĕнчен йулмасăр, пырсан-пырсан наганне кĕрлеттерсе йарать. Хăй çаплах: — Тыт! Тыт! — кăшкăрать . . .

— Мĕн ухмахланать ку пирĕн фелдфебĕл.

— Курмастăн-им? Авă, тыткăна лекнĕ бандита персе вĕлерме йалтан уйала хуса тухать.

— Е-е... Ха-ха-ха!.. Пĕркун та вăл çапла пĕрне, уй тăрăх хуса çӳресе, персе вĕлерчĕ.

— Хы-хы хы! Йуратаť бандитсене вĕлерме.

— Йуратмасăр, виççĕмĕш çул вĕт каратĕлни отрйадра тăраť. Вĕреннĕ ĕнтĕ. Ахаљтен мар икĕ медаљ панă. Акă, час хĕрес те парĕç.

— Пур йенчен те пултараť. Çырăва çеç сахал пĕлет. Тахç: нах офицере тухмала...

Савăнăçлă калаçса тăрса йулчĕç каратĕлни отрйад салтакĕсем.

Макар малтан, ун хыçĕнчен фелдфебĕл йалтан уйала тухса кайрĕç. Макар çавăрна-çавăрна пăхаť. Фелдфебĕл çывхарнă çемĕн çывхараť. Наганне хăй пĕрмай кĕрлеттерет.

Акă, йал та курăнми пулчĕ. Фелдфебĕл наганĕнчен пеме чарăнчĕ. Кам пĕлет, тен патронĕ сахалланчĕ пулĕ, тен урăх сăлтав. Макар ăна пĕлмест.

Макар йулашки хут çавăрăнса пăхрĕ. Кураť — фелдфебĕл çывăхах çитнĕ:—Персе мар, хĕçпе касса пăрахасшăн пуљ. Ах, йепле тарса хăтăлас, шухăшлаť вăл, лашине урисемпе тапăрласа. Çук: лаши хут те темле хистесен те, фелдфебел лашинчен нимпе те уйăрăлаймасť. Макаршăн вăл пĕр вырăнтах тапăртатса тăнă пек туйăнаť. Çавăнпа та, лаша çинчен сиксе анса, çуран тарма шутласа пăхаť. Анчах тарса хăтăлассăн туйăнмасť. Макар çамрăк-ха. Унăн пурăнас, курас, илтес, пĕлес килет. Вилес килмест:—Пурĕ пĕр пĕрре. Халĕ ĕнтĕ епĕр уй варринче иккĕн çеç, йе вăл мана, йе епĕ ăна",—тесе шухăшларĕ те вăл, лашине фелдфебел йеннеле пăрса, кушак пек сикрĕ, фелдфебĕлĕн мăйĕнчен çавăрса илсе, лаши çин-

чен сётёрсе антарчё. Ак, иккёшё çăмха пек айёнçийён çавăрăна пуçларёç. Пёрре пёри, тепре тепри çийеле тухаť.

Акă, Макар, фелдфебёле çавăрса çапса, ун çине хăпарса выртрё те мăйёнчен пăвма тытăнчё. Анчах çав вăхăтрах фелдфебёл, сасартăк кăшкăрса йарса, Макара хăй çийёнчен айаккала сирсе пăрахрё те ури çине сиксе тăчё:

— Çывăха ан кил. Халех персе пăрахатăп!— кăшкăрса йачё вăл, наганёпе тёллесе...

Макар, тăп чарăнса, йупа пек хытса кайрё.— Тинех персе пăрахаť, тесе шутласа илчё вăл.

— Ха-ха-ха. Ан хăра. Епё сана перес çук. Кил кунтала,—терё фелдфебёл савăнăçлăн кулса. Унтан наганне чиксе хучё. Макар пёрре хăранипе, тепре савăннипе мён иккенне пёлмесёр тăраť.

— Мён хытса тăратăн тата? Кил ёнтё—тепёр хут чёнчё фелдефбёл.

Йулашкинчен тин Макар фелдфебёле сасран уйăрса илчё. Вăл, фелдфебёл мар, Ваӊушкин пулса тăчё. Вилём аллинчен хăтăлнипе савăнса, Макарăн урисем лаштах кайрёç. Вăл ўсёр çын пек чёркуççисем çине хутланса ларчё.

Ваӊушкин Макар умне пырса тăчё:

—Ан хăра, хăтăлтăмăр ёнтё. Ме-ха, кăшт шыв ёçсе пăх, çăвару типнё пуљ.

Макар, шыв ёçсе, сывлăшне çавăрчё.

— Епё ним те ăнланаймастăп. Мёнле пулчё-ха ку? Епё вёт сана фелдфебёл тесе, кашни çекундăрах вилём кётсе тарнă. Хаљ Макарăн сăмахёсем таса тухрёç "С„, „Ç" саспаллисем вырăнне „Ш" каламарё. Вăл сиксе тăрса Ваӊушкина ыталаса чуптурё.

— Акă, мĕнле пулчĕ. Илтрĕн пулĕ вĕт вăл ман пата пырсан: „Молчаť. Мĕншĕн тăшманпа кала çатăн“, тесе кăшкăрнине?

— Илтрĕм.

— Çавăн чух, йĕри-тавра пăхатăп, никам та курăнмасť. Салтаксем шыв илме кайнă. Фелдфебĕл нўхреп лаççине кĕрсенех, ăна хырăмĕнчен штыкпа йашлаттартăм. Унтан, шинелĕпе картусне хывса илсе, тумлантăм. Ак, куратăн вĕт: епĕ—фелдфебĕл, есĕ—тыткăна лекни,—савăнăçлăн кулса йачĕ Вађушкин.

— Ку лашасене ăçтан хатĕрлерĕн?

— Лашасем вĕсем леш кăпитан Могиљникăвпа унăн адйутанчĕн.

— Тавтапуç сана, йулташ. Есĕ, мана çеç мар, пирĕн пĕтĕм отрйада хăтартăн. Унта пилĕк çĕр çын. Вĕсем лачака ункинчен тухма çул пĕлмеççĕ. Выçă. Ку ĕçшĕн сан йату пролетари кĕрешĕвĕнче чаплă вырăн йышăнса тăрĕ.

Каллех, пĕрне пĕри ыталаса илсе, чуп турĕç.

— Ну, йулташ. Аťа хăвăртрах. Епĕ отрйадран тухни икĕ тавлăк çитрĕ. Унта мана кĕтеççĕ.

Макар, хăвăрт утса пырса, лаши çине утланса ларчĕ. Анчах халĕ çеç савăнăçлă Вађушкин пуçне лашт чикнине курчĕ.

— Вађушкин йулташ. Мĕн пулчĕ тата сана? Утлан лашуна. Аťа, хăвăртрах,— кăшкăрчĕ Макар.

— Ех, йулташ. Есĕ савăнăçлă, хăвăн çывăх йулташусем патне таврăнатăн. Анчах епĕ ăçта? Унта партизансем. Епĕ каратĕлни отрйад салтакĕ. Ман çине мĕнле куçпа пăхĕç вĕсем? — терĕ Вађушкин ўкнĕ сассипе.

— Ха-ха-ха.. . Мĕнле куçпа. Çаплах, тӳп-тӳрĕ куçпах пăхĕç. Вĕсене епĕ ес кам иккенне каласа парсан, сана, айăплама мар, алă çинче йăтса çӳрĕç. Есĕ вĕт каратĕлни отрйада ху ирĕ кӳпе мар пынă, сана вăйпа тытса пынă.

— Тĕрĕс, — терĕ те лаши çине сиксе утланчĕ Ваҥушкин...

Çавăнтах икĕ йуланут, харăс сиксе, хускалса кайрĕç.

## VII

Макэрпа Ваҥушкин, савăннипе, каç пулнине те сисмен. Çăмăр çума чарăннă. Тулли уйăх тăрă пĕлĕт çине çунакан капан пек çĕкленет. Çĕр тĕттĕмĕ уçăла пуçларĕ.

Икĕ йуланут, лашисене йăкăлт-йăкăлт сиктерсе, лачака йеннеле пыраççĕ. Сасартăк инçе те мар йăвăррăн сывласа йăнăшакан пĕр сасă илтĕнчĕ.

— Тпру!

— Кам, йăнăшаť унта?

Макарпа Ваҥушкин лашисене тăп чарчĕç. Сасă пĕр вĕçĕмсĕр ахлатса йăнăшаť. Вăл пĕрре таçта инçетре пек туйăнаť, тепре çывăхра пекех илтĕнет.

— Çын сасси ку.

— Мĕнле çын ши вăл?

— Аťа, çитсе пăхар.

Çавăнтах, лашисене пăрса, сасă йеннеле чуптарчĕç. Нумайах та каймарĕç, пĕр çын мĕлки упаленни курăнчĕ. Вăл ури çине тăрасшăн çĕр çумĕнчен çĕкленет те каллех ахлатса йăванса ӳкет.

Макар çын патне çитсе чарăнчĕ.

— Кам есĕ? Мĕн пулнă сана?

— Ой. Е-епĕ... Шчетинкин партизан отрйадĕнчен. Тархасшăн вĕлерсе хăварăр мана, йулташ. Çын, пуçне çĕклесе, мĕскĕнĕн пăхрĕ.

Макар çавăнтах палларĕ. Вăл лаши çинчен сиксе анчĕ те мĕлке умне чĕркуçленсе ларчĕ.

— Фролов, есĕ-им ку?

— Е-епĕ... шыв ĕçесчĕ. Ой! çунса вилетĕп.

— Ваҙушкин йулташ, пар шывна...

Ваҙушкин. лаши çинчен сиксе анса, флҙажкине хывса пачĕ. Фролов флҙажкăри шыва лăнкăртаттарса ĕçсе йачĕ.

Фролова шуррисен пулҙҙи вилмеле мар лекнĕ,— вăл аманнă çеç. Икĕ тавлăк вăл ăçтала та пулсан кайасшăн пулса упаленнĕ. Анчах, лаши çинчен мĕнле ӳкнĕ, çав вырăнтан ниăçта та хускалайман, мĕншĕн тесен унăн икĕ ури те аманнă пулнă. Пĕрмай ахлатнипе, сасси тытăнса ларнă. Вутпа пĕçернĕ пек, тути-çăварĕсем хăпаланса тухнă. Йун нумай йухнипе, сăнĕ шапшурă шуралса йулнă. Çак икĕ тавлăк хушши ăна никам та курман, сассине те илтмен!

— Ну, Фролов йулташ. Иксĕмĕр те вилĕм аллинчен çăлăнтăмăр. Отрйад инçе те мар. Сурану йăвăр пулсан та, кăшт тӳс, — терĕ Макар, Фролова лаши çурăмĕ çинчи йĕнерĕ çине урлă вырттарса.

Çавăнтах йуланутсем уйăх çути айĕнчен, йăвăççем хушшине кĕрсе кайса, курăнми пулчĕç...

## VIII

Виççĕмĕш тавлăк кĕтет ĕнтĕ Шчетинкин, пĕр куç хупмасăр, Макарпа Фролов çаврăнса килессе.

Аптăранă йенне вăл тĕрлĕ май шухăшласа пăхать:
— Каллех пĕр-пĕр йала лексе, ерех ĕçсе, хĕрарăмсемпе асса çӳрет пулĕ... Ех, сана, Макар... Çук апла тесен, вăл хăй килмесен те, Фроловне йарĕччĕ. Пĕлет вĕт вăл отрйад лачака ункинчен тухма çул тупайманнине, выçă ларнине. Тен карагĕлни отрйад аллине çитсе лекрĕç-ши... Апла вара кĕтмели те çук... Кĕнĕ йĕрпе кайалах тухас пулать. Анчах тухма хăрушă. Унта, мĕн каласан та, шуррисем сыхласа тăраççĕ. Урăх вырăнтан тухма çул пĕлекен çын çук. Ех, мĕншĕн йатăм-ха епĕ ăна.

Шчетинкин каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрет.

Йĕри-тавра хура вăрман кашлать. Нӳрлĕ шăрш сăмсана çурать. Партизансем выçă. Çимели нимĕн те çук. Аптăраса çитнипе вĕсем кĕпçесем тупса чăмлаççè. Хăшĕ-пĕрисем, пилĕкĕмĕш тавлăк çăкăр хĕлхемĕ хыпса курман пулсан та, пуçĕсене усмаççĕ. Унта та кунта йурланă, ташланă сасăсем илтĕнеççĕ:

Ай-ну, мĕн пулчĕ?
Буржуйсен шалçи тулчĕ...
Пире ирĕклĕх çитрĕ...
Ĕмĕрхи нуша пĕтрĕ...

Вĕсем пирвайхи кун çеç мар капла выçă. Хăш чух кунтан та ытларах выçă çӳренĕ. Çапах тӳснĕ, вилмен. Вĕсем Шчетинкин çине шанаççĕ: вăл, кун пек йăвăрлăхран çеç мар, ытлараххинчен те хăтарса тухнă.

Хăшĕ-пĕрисем пуçĕсене уснă. Вĕсем Шчетинкин çине сивĕ куçĕсемпе шанчăксăр пăхаççĕ: — Ун пирки çак лачака ункинче выçă ларатпăр. Йăнăш кĕрсе кайнине пĕлсенех кĕнĕ йĕрпе тухмалаччĕ,

тесе пăшăлгатса калаçаççĕ. Кун пек шухăшлисене Шчетинкин куçĕсенчен пăхсах пĕлет.

Хăшĕ-пĕрисем лайăхрах кăмпа тупсан, хăйсем çимесĕр Шчетинкин патне илсе пырса: — Шчетинкин йулташ, санăн та хырăму выçнă пулĕ, me. çисе пăх, тесе сĕнеççĕ.

Çук, ун çийес шухăш мар, урăх. Унăн, йепле майпа çул тупса, отрйада лачака ункинчен илсе тухас шухăш. Çапах та, кăмпа параканăн кăмăлне хуçасшăн мар пулса: — Тавтапуç, йулташ. Хăвăн çимелеччĕ. Епĕ — тутă, — тесе тавтăвать.

Лачака йĕри-тавра унта та кунта разведчиксем çӳреççĕ. Анчах ниçтан та тухма çул тупаймаççĕ.

Макарпа Фролов пĕтĕмпех çухалчĕç. Хăшĕ-пĕрисем вĕсем калле çаврăнса килессине шанми пулчĕç.

— Епĕ малала выçă тӳссе пурăнма пултараймастăп ку лачака ункинче. Есĕр хуть те мĕн тăвăр. Епĕ килнĕ йĕрпе калле тухатăп, — терĕ Трусăв, Шчетинкин умне лашипе пырса тăрса.

Шчетинкин Трусăва урлă та тăрăх пăха-пăха илчĕ.

— Хăравçă. Йăвăрлăха тӳсме пултараймастăн. Шкурник. Хăвăн тирне çеç сыхласшăн. Отрйада пăхăнассу килмесен, кай. Епĕ сана чармастăп. Анчах... урăх вара пирĕн отрйада килсе ан хутшăн. Мана хăравçăсем кирлĕ мар. Епĕр Макарпа Фролов килессе кĕтетпĕр-ха.

— Хуть те мĕн каласан та, епĕ чарăнас çук ĕнтĕ. Шухăшланă, пĕтнĕ, — терĕ Трусăв. Унтан лашине отрйад килсе кĕнĕ йĕрпе калле сиктерчĕ Трусăв хыçĕнчен тата ик-виçĕ йуланут хускалса кайрĕç.

— Ех, хăравçăсем. Выçă вилесрен хăраса, отрйада пăрахса кайаççĕ. Нумайа тўснине, сахала тўсеймеççĕ.

— Вĕсен партизанра мар, килĕсенче, арăмĕсем хыçĕнче çеç выртмала пулнă, — тесе, кулса йулчĕç партизансем.

— Выçă ларсан-ларсан, есĕр те пирĕн хыçран тухăр-ха, — кăшкăрса хăварчĕ Трусăв.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, инçетре — тра-та-та... ух-ух... пăшал тата пулемет сассисем кĕрлени илтĕнчĕ.

— Хырăмсене тăрантарасшăн кайса, шуррисен капкăнне çитсе лекрĕç, — калаçса илчĕç партизансем.

— Тĕрĕс. Каратĕлни отрйад пирĕн отрйад тухасса сыхланă, — шухăшларĕ Шчетинкин та.

Кăшт тăрсан, Трусăвăн лаши хырăмĕ айнеле çавăрăннă йĕнерпе çапкалантарса, аçа-çиçĕм пек сиксе пычĕ.

— Хăйне йе вĕлернĕ, йе тыткăна илнĕ ĕнтĕ, — каллех калаçса илчĕç партизансем...

— Çав кирлĕ. Йăвăрлăхран ан тартăр..

Йăвăр хуйхăлă çĕр çутăлас йенне сулăнчĕ. Уйăх аннă çĕре шурăмпуç шуралса килчĕ. Çăлтăрсем, чўхенсе тăнă çĕртех, пĕрерĕн пĕрерĕн сўне пуçларĕç.

Шчетинкин малала тўссе тăраймарĕ: ăйăрне утланчĕ те лачака тăрăх çул шырама кайма пуçтарăнчĕ. Шăп çав вăхăтра шурăмпуç çути айĕнчен йуланутлă мĕлкесем курăнчĕç.

— Макар!..

— Фролов!..

— Çитрĕç

— Ура-а-а-а! — кăшкăрса хирĕç чупаççĕ партизансем..

— Ура! — кăшкăрчĕç килекенсем те. — Çул тупрăмăр. Отрйад çăлăнаť...

— Тавтапуç сире, йулташсем. Отрйада лачака ункинчен туртса кăларнăшăн сирĕн йатăрсем пролетариатăн историйĕнче пăллă вырăна çырăнĕç, —терĕ Шетинкин, Макарпа Фролоза ытала-ытала чуптуса.

— Пире çеç мар, акă кама пуринчен ытла тавту. Вăл пире вилĕм аллинчен çăлчĕ. Ун ырлăхĕпе пирĕн отрйад лачака ункинчен тухĕ, — тесе фелдфебĕлле тумланнă Вађушкин çине кăтартрĕ Макар. Унтан ĕç йепле пулнине йĕрки йĕркипе каласа пачĕ. Партизансем Макара, ункă пек çавăрса илсе, итлерĕç. Йулашкинчен Макар хăйĕн сăмахне çапла пĕтерчĕ: — Тăвăр сукмак тăрăх килетпĕр. Сасартăк лаша кĕçенни илтĕнчĕ. Пăхатпăр, — Фролов лашин пуçĕ кăна курăнаť. Вăл сукмакран çиме шыраса пăраннă та лачакана путса ларнă. Аран-аран кăлартăмăр. Ман лашана каратĕлни салтаксем персе вĕлерчĕç.

Шурăмпуç сӳнчĕ. Хĕрлĕ хĕвел, йун пек хĕрелсе, çунса тухрĕ.

Шчетинкин отрйачĕ тăвăр сукмак тăрăх, хур кĕтĕвĕ пек, умлăн-хыçлăн лачака ункинчен тухаť.

Çав кун ĕнтĕ Шчетинкин отрйачĕпе Могилникăвăн каратĕлни отрйачĕ йулашки хут тытăçрĕç. Кăнтăрла çитнĕ çĕре Кăшлав йалне партизансем йышăнчĕç. Анчах Могиђникăвăн салтакĕсем йалтан тухса кайни курăнмарĕ. Кăпитан Могиђникăвăн хăйĕн те йачĕ илтĕнмерĕ. Унтан мечĕт картин хапхи çумĕнче çеç çакăн пек приказ йулчĕ:

## Приказ капитана Могильникова.

В разных частях нашего уезда появились организованные шайки бандитов, которые состоят исключительно из воров и хулиганов. Часто нападают на должностных лиц, убивают священников, грабят волостные и сельские управы; грабят зажиточных крестьян, разрушают телеграфную связь, ломают железнодорожную линию и пр..

Для быстрой ликвидации шайки бандитов с моим доблестным отрядом выехал я сам.

С сегодняшнего дня объявляю район на военном положении. Уничтожить без суда и следствия всех, принимающих прямое или косвенное участие в шайке бандитов.

Приказываю всем старостам принять меры к самому широкому распространению настоящего приказа среди населения.

Начальник карательного отряда капитан Могильников. 20 сентября 1919 года.

Çак приказа Шчетинкин чарăнсах вуласа пăхрĕ. Унтан вăл ăна, хăйпăтса илсе, кăсйине чикрĕ...

Партизансем çăлăнчĕç. Каратĕлни отрйад пĕтрĕ.

Çав чаплă ĕçе ĕмĕр хисеплĕн асăнмалăх, кайарахпа Кăшлаври ĕçхĕресченĕсем хăйсен йалĕн йатне чаплă партизан отрйачĕн пуçлăхĕн йачĕпе улăштарчĕç.

Халĕ ĕнтĕ çав тутар йалĕ, Кăшлав мар, Шчетинкин йатлă.

1930 çул
Минуçинск—Уçинск.

6244.

## ВУЛАКАНСЕНЕ

Литҫектӑр сиртен ҫак калавӑн лайӑх йенӗсемпе ҫитменлӗхӗсем ҫинчен тата кӗнекине пичетлесе кӑларас тӗлӗшрен мӗнле ҫитменлӗхсем пулни ҫинчен хӑвӑр шухӑшӑра тӗплӗн ҫырса пӗлтерме ыйтат̆.

Пирӗн адрӗс: Шупашкар, Канаш урамӗ, 10, Чӑвашиздат, Илемл̣ӗ литературӑ ҫектӑрӗ.

Инв. № 6244.
Ц. 198_ г. № 94

Хакĕ 30 пус
Цена 30 коп.

0-03

Ц 6359

Чув.
2-2136а

9

М. Н. Данилов-Чалдон

ИЗ КОЛЬЦА

Чувашиздат—Чебоксары
1935